ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

40 (4454) №, 2015, октябрь / юпа /, 1
(1931 çулхи январĕн / кăрлачăн / 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

**ЮПА УЙĂХĔН 1-МĔШĔ – ВАТТИСЕН КУНĔ**

## Мăнукăмсем — чун уççи



**Хăй пурнăçĕнче чылай нуши-тертне курнă Юлия Васильевна Воронцова кăçал 81 çул тултарчĕ. Апла пулин те хаçат-журнала куçлăхсăрах вулать.**

– Тăватă класс кăна вĕренме май килчĕ манăн. Пирĕн пӳрт пысăкран шкулне те кунта уçнăччĕ. Çавна пулах вăрçă вăхăтĕнче Ленинградран эвакуаципе килнĕ пĕр вырăс çемйине пирĕн пата вырнаçтарчĕç. Вĕсем кĕнекепе туслине кура хам та вулама юрататтăм. Халĕ те çавах. Авă ачасем те хаçат-журналсăр пурăнаймаççĕ, – çирĕплетет кинемей хăй пурнăçĕпе паллаштарнă май.

Хĕрĕ Надя та унчченех «Пионер сасси» хаçата, «Хатĕр пул» журнала кăмăлласа вуланă. Паян Воронцовсен çемйи чăваш кăларăмĕсене «Теттерен» пуçласа «Хыпар» таранах илсе тăрать.

Вулакан çыннăн çеç тавракурăмĕ аталаннине пĕлет Юлия Васильевна. Çавна май, кĕçĕн хĕрĕн Таньăн, Вăтакас Татмăш шкулĕнче иккĕмĕш тата тăваттăмĕш классенче вĕренекен Ромăпа Саша мăнукĕсене «Тетте» тата «Тантăш» çырăнса панă. Çакăншăн арçын ачапа хĕрача чунтан савăннă.

– Эпир кукамая анне тесе чĕнетпĕр. Ăна мĕн тери юрататпăр тата! Пире яланах тутлă çимĕçсемпе хăналама тăрăшать вăл. Килĕшекен кăларăмсем вĕренӳре çитĕнӳсем туса пыма пулăшаççĕ. «Тетте» журнала аппапа ăмăртмалла вулатпăр. Сăвви-калавĕ, ӳкерчĕкĕсем – йăлтах килĕшеççĕ, – тет Рома хăпартланса.

Юлия Васильевнăн хĕрĕ, Надя, хăй вăхăтĕнче Йĕпреçри интернат шкулта вĕреннĕ.

– Хам ӳркев пулнăранах унта лекрĕм ĕнтĕ. Мана ăс панă педагогсемпе воспитательсене тем пысăкăш тав сăмахĕ калатăп. Ĕнтĕ çав шкула виççĕмĕш çул «Тетте», «Самант» журналсем çырăнса паратăп. Ан тив, унти ачасем те чăваш кăларăмĕсене вуласа савăнччăр. Çитменнине мана интернат пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă-çке. Уйрăмах Нарспи Корниловнăпа Антонина Андреевна педагосем асра. Вĕсен ырă кăмăллăхĕпе тараватлăхне кура хамăн та вĕсем пек пулас килетчĕ. Ĕмĕтсем пысăкчĕ-ха манăн, анчах 1998 çулта аварие лексен вĕсем лапах сӳнчĕç темелле. Çулсем сисĕнмесĕр иртрĕç, ĕнтĕ хам шăпапа çырлахрăм темелле. Ара, манран чирлĕ çынсем пур-çке çакă çутă тĕнчере. Вырăнпах выртаканни те, куç курманни те, хăлха илтменни те пур... Эпĕ хăть упаленсе çӳрекелетĕп-ха. Чун уççи – хаçат-журнал. Вĕсене вуламасан тем çитмен пекех туйăнать, – тет Надя йăл кулса.

*Элиза ВАЛАНС.*

Канаш районĕ,
Йăлмачча.

**Сăнӳкерчĕкре:** Юлия Васильевна Надя хĕрĕпе тата мăнукĕсемпе.

➲➲➲ (Тема тăсăмĕ 5-мĕш стр.)

ÇЫРĂНТАРУ — 2016

**Вăхăт шав малаллах шăвать. Тин çеç вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Ак сисмĕпĕр те, пĕрремĕш чĕрĕк, унтан иккĕмĕшĕ те вĕçленĕç. Вĕсемпе пĕрлех «Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсене çырăнмалли тапхăр та вăшт кăна иртсе кайĕ. Васкăр! Çырăнса илĕр! Хăвăр çырăнăр та тусăрсемпе кӳршĕсене те кун пирки калăр. Вĕсем те çак кăларăмсемсĕр ан юлччăр!**

# Кашни урокра – çĕнни



Чăваш чĕлхипе литературине ачасем юратса вĕренеççĕ. Пурнăç аталаннă май, вĕренӳ программи те улшăнса пырать. Учительсем те хăйсен ĕçĕнче çĕнĕ технологисемпе усă кураççĕ. Ку шкул ачисенче тăван чĕлхене таранрах пĕлес туртăма самай вăйлатать. Шăпах çак тĕллевпе ĕнтĕ хула çывăхĕнчи шкулта ятарлă стажировка иртрĕ.

Мероприятие республикăри Вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедри йĕркелерĕ. Унта Шупашкар тата Çĕрпӳ районĕсен шкулĕсенчи тăван чĕлхепе литература учителĕсем хутшăнчĕç.

Шкул ачисем ытти учительсен урокĕсенче тĕлĕнмелле хавхаланса та тимлесе ларни кашнине тĕлĕнтерчĕ. Вĕсенче çунатлă хавхалану вĕресе тăчĕ тейĕн. Классенче И.А.Фомина «Литература юррисем, вĕсенче илемлĕх курма вĕрентесси», А.В.Волкова «Çĕнĕ технологипе усă курса «Йывăççем» темăна вĕрентесси», С.Ю.Ефимова «Ача-пăча сăмахлăхне пиллĕкмĕш класра вĕрентесси», А.В.Ишова «Çĕнĕ технологисемпе усă курса В.Агеевăн «Чăваш вăййи» ӳкерчĕкне тишкересси, сочинени çырасси», Л.Ю.Николаева «Пайăр ятсене вĕрентнĕ май кулленхи вĕренӳре усă куракан ĕç-хĕле йĕркелесси», Н.Д.Васильева «Сывлăха упрас тесен мĕн тумалла?» темăсемпе ирттернĕ ăсталăх урокĕсенче ачасем нумай çĕннине пĕлчĕç. Çак туртăм вĕсенче татах та пурри кашнин пит-куçĕнче палăрчĕ.

Тутаркасси шкулĕнче вăтăр çул тăрăшакан Альбина Валентиновна Ишова кунта тĕлĕнмелле чаплă музей класс йĕркеленĕ. Учитель кунта пултарулăх лабораторийĕ пек усă курать. Дидактика материалĕсем, кăтартупа техника хатĕрĕсем, компьютер, кĕнекесем, чăваш хаçат-журналĕ яланах ал айĕнче. Вĕсемпе педагог тăтăшах усă курать. Чăваш халăхĕн уяв çи-пуçĕ, тумтирĕ, хĕрарăм капăрлăхĕ, авалхи савăт-сапа, пир-авăр япалисем музей класра хăйсен тивĕçлĕ вырăнĕсене тупнă. Ку пĕтĕмпех ачасене чăваш чĕлхипе литератури тата тăван ен культури урокĕсене иртернĕ чухне усă куракан паха кăтарту хатĕрĕ пулнине палăртрĕ Альбина Валентиновна.

Вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин пуçлăхĕ А.С.Егорова ăсталăх урокĕсем курăмлă та пахалăхлă иртни, вĕрентӳре хальхи тата çĕнĕ технологисемпе усă курни питех те вырăнлă пулнине, вĕсем çамрăк учительсене кирлине палăртрĕ.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***«Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсен секцийĕн ертӳçи.***
Шупашкар районĕ,
Тутаркасси шкулĕ.

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** «Тата мĕн интереслипулĕ-ши?» – кĕтет кашни вĕренекен урока çĕнĕ технологипе иртерекен учительтен.

# Шкулта – пĕрлĕхлĕ хăрушсăрлăх кунĕ



24-мĕш шкулта Пĕрлĕхлĕ хăрушсăрлăх кунĕ иртрĕ. Унта хутшăнма вĕрентекенсем те, вĕренекенсем те, ашшĕ-амăшĕ те лайăх хатĕрленчĕç. Ачасене çул-йĕр правилисемпе инспектор паллаштарчĕ, кăсăклантаракан ыйтусене хуравларĕ. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем çемйисемпе ăмăртрĕç. Пурте тивĕçлипех кăтартрĕç хăйсене, çавăнпа та туслăх çĕнтерчĕ.

Пиллĕкмĕш тата çиччĕмĕш класс ачисен команди те хастар тупăшрĕ. Вĕсем ребуссен, тупмалли юмахсен тупсăмĕсене шырарĕç. Ваттисен сăмахĕсемпе çул-йĕр правилисене пĕлнине те кăтартрĕç. Унта çиччĕмĕш «в», улттăмĕш «а» класс командисем палăрчĕç.

Пуçламăш класра ăс пухакансем çул-йĕр правили тематикипе тунă ӳкерчĕксемпе, хăйсен аллисемпе ăсталанă макетсемпе савăнтарчĕç.

Çакăн пек мероприятисем иртерни ачасене çул çинче тимлĕрех те асăрханулларах пулма вĕрентет.

***Светлана ФЕДОТОВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
24-мĕш шкул.

# Тавралăха юратма вĕрентекен



Етĕрне районĕнчи Палтай шкулĕнче кĕçĕн классене вĕрентекен Мая Германовна Шуверова хăйĕн ĕçне чунтан парăннă. Тĕрлĕ предмета ăса хывма пулăшнисĕр пуçне вăл ыркăмăллăхпа юрату урокĕсене ертсе пырать – ачасене тавралăха, тăван çĕршыва, çутçанталăка юратма, унăн илемне хаклама хăнăхтарать. Хăй чечексемпе кăсăкланнăран вĕренекенĕсене те çак ĕçе явăçтарать. Кĕркунне çитсен çулсеренех шкул пахчинче ешерекен çеçке вăрлăхне хăйсемех пуçтарса илеççĕ. Тепĕр çул çуркунне акса калча çитĕнтереççĕ.

Мая Германовна – темиçе фотокурав йĕркелӳçи те. Сăнӳкерӳ чун киленĕçĕ пулнине палăртать тăрăшуллă вĕрентекен. Çавна май «Халăх шкулĕ» журнал çулсерен иртерекен «Ырăлăх педагогики» фотоконкурса хутшăнса кашнинчех малти вырăнсене тивĕçет. Шкулта фотокружок ертсе пырать. Ачасемпе пĕрле шкул пурнăçне, тĕрлĕ мероприятие сăнлакан «Эпир» фотохаçат кăлараççĕ.

– Хам мĕн пĕлнине çитĕнекен ăрăва та вĕрентесчĕ, – тет хастар педагог.

***Нина ЦАРЫГИНА.***
**И.КЛОЧКОВ сăнӳкерчĕкĕ.**

# Ăшă саламсем

СМС саламсене пĕлтермелли номер:
89051975911

+79603061725 Юратнă кукамая **Фелицата Георгиевнăна**, кукаçие **Геннадий Никифоровича**, асаннене **Людмила Николаевнăна**, асаттене **Алексей Николаевича**, ват асаннесене: **Мария Григорьевнăна, Екатерина Петровнăна**, ват мăнаккана **Мария Андреевнăна,** тăвансене: **Николай Георгиевича, Тамара Николаевнăна, Анисия Георгиевнăна, Михаил Николаевича, Галина Георгиевнăна, Николай Алексеевича, Роза Георгиевнăна, Алексей Николаевича, Фаина Николаевнăна, Ольга Николаевнăна; Валентина, Галина, Николай СМИРНОВСЕНЕ; Николай, Людмила, Раиса, Таисия, Валерий МАТВЕЕВСЕНЕ; Виталий, Антонина ЧАВОНЕВСЕНЕ** Ватăсен уяв кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп. Хыçа юлнă çулсем çине çаврăнса пăхмасăр вăрăм ĕмĕр сукмакĕпе малалла та хастаррăн утма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, ăнăçупа телей, канлĕ ватлăх сунатăп.

***Ăшă салампа мăнукĕ, тăванĕ Анатолий ШАБАЛОВ.***
Çĕмĕрлери 3-мĕш шкул.

**Вĕренмен çын хăй чĕлхине те лайăх ăнланмасть.**

**Тантăш**
чăваш ачисен хаçачĕ

**● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:**
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

**● Редакципе издатель адресĕ:**
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

**●** "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

**● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:**
Тел.: 56-00-23

**● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОРШĂН**
**Г.А.МАКСИМОВ**

**● ТЕЛЕФОНСЕМ**
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

**● РЕДАКТОР**
**В.ФЕДОРОВ**

**● НОМЕР ВУЛАВÇИ**
**Л.ПЕТРОВА**

**● КАЛĂПЛАВÇĂ**
**Н.ПЕТРОВА**

**● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:**
e-mail: tantas@list.ru

**● ТИРАЖ**
**1233 экз.**

**● ЗАКАЗ**
**№ 3793**
Пичете сентябрь уйăхĕн 30-мĕшĕнче алă пуснă.

**● ПИРĔН САЙТ:**
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш
40 №, 2015, октябрь, 1



# Чăваш Ен – савнă енĕм

Кашни çыннăн юратнă кĕтесĕ пур. Вăл уншăн яланах илемлĕ, илĕртӳллĕ, ырă, хăватлă. Мĕншĕн тесен вăл – Тăван çĕршыв, мĕн пĕчĕкрен выляса та кулса ӳснĕ тавралăх. Унăн кашни кĕтесĕ пирĕншĕн çывăх, хăй патне туртакан асамлă вăйпа хăватлă.

Йăмраллă ял, уй-хир, вăрман
Нихçан та каяс çук асран.
Пурте çывăх, пурте тăван,
Илĕртӳллĕ, илемлĕ, пуян.

Йăмраллă чăваш ялĕ… Мĕн кăна тӳссе-чăтса ирттермен-ши вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче!

Историксем тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, чăвашсем халĕ хăйсем тĕпленсе пурăнакан вырăна 10-мĕш ĕмĕрчченех куçса килме пуçланă. Атăлçи Пăлхар хулисене тутар-монголсем вăрă-хурахла аркатса тăксан вара ырă-сывă юлнă йăх пуçĕсем е вĕсен чĕрĕ юлнă çамрăк ывăлĕсем хăйсен йăхташĕсене йышлăн куçарса килме тытăнаççĕ. Ку вăл 13-мĕш ĕмĕрте пулнă. Анчах çĕнĕ çĕрте вĕсем валли никам та хăтлăх хатĕрлесе хуман.

Çапах пуçне усмасть чăваш! Малаллах талпăнать, пурнăç тума ăнтăлать. Тăван тавралăх. Тăван çĕршыв. Мĕн-ши вăл? Тăван çĕршыв вăл – атте-анне, çуралнă кил, ял, шкул, вăрмансемпе хирсем, тăван халăх, тăван чĕлхе, юратнă Чăваш Ен. «Тăван çĕршывран хакли çук», – теççĕ. Хам çуралса ӳснĕ кил тата ял яланах куç умĕнче, чун-чĕрере. Атте-анне пилленĕ илемлĕ чĕлхе, вĕсен ырă халĕ ĕмĕрлĕхех манпа пĕрле. Çепĕç чĕлхепе калаçса, халăхпа хутшăнса, чечекленекен Чăваш Енпе хавхаланса, савăнса пурăнатăп çĕр çинче.

Чăваш Ен – манăн савнă енĕм. Пирĕн паллă ăсчах Г.Н.Волков этнопедагог каланă пек, тăван çĕрĕн тăванĕ те тăван, пылчăкĕ те пылак. Эпĕ хамăн пурнăçа, ĕмĕт-туйăма унсăр курмастăп та. Мĕншĕн тесен чăн-чăн чăваш чунлă çын хăйне чăвашлăхра кăна мăнаçлă туять. Çĕршывăм хăйĕн кун-çулĕнче тумхахлă çул-йĕрпе утса, асап-нуша тӳссе, кĕрешсе-çĕнтерсе, савăнса-хурланса, аптраманлăхпа палăрса, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ туса çĕнĕ ĕмĕре сулмаклăн та тивĕçлĕн утса кĕни мана çунатлантарать.

Пире мĕн пĕчĕкрен тавралăха, çуралса ӳснĕ ене юратма, унăн сывлăшĕпе сывлама тивĕçлĕ пулма атте-анне те, вĕрентекенсем те, ватлăх çулне çитнĕ çынсем те час-часах аса илтереççĕ, вĕрентеççĕ. Çак вĕрентӳ пуриншĕн те усăллă пуласса эпир те лайăхах чухлатпăр. Çавăнпа та вĕсен сăмахне тĕпе хурса хамăрăн пурнăçри тĕллеве пурнăçлама тăрăшатпăр. Шкулта пурнăça юратма хăнăхтаракан учительсем пире нумай пулăшаççĕ. Уйрăмах чĕлхепе литература урокĕсенче эпир тăван енĕн пахалăхне курма, ăна тивĕçлĕ хаклама тăрăшатпăр. Çавăн пекех атте-аннене юратма, хисеплеме вĕрентеççĕ пире.

Атте! Анне! Ытарайми чăваш сăмахĕсем. Çывăх çыннăмărсемпе хурăнташсен ячĕпе темĕн чухлĕ ырă та çепĕç сăмах калас, вĕсемпе юнашар ларса ăшшăн пуплес килет. Ытла та ăслă вĕсем, ытла та кăмăллă. Чунчĕринчи мĕн пур лайăх енне пире халалласçĕ, куллен-кун телей пиллесе пурăнма вĕрентеççĕ. «Атте-анне паман ăса кĕнеке те параймĕ», – тенĕ ваттисем. Чăнах та, эпир атте-аннерен вĕренсе пыратпăр, тĕслĕх илетпĕр.

Ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ывăлхĕрне нихăçан та усал сунмасть ĕнтĕ, ăна çĕршыва юрăхлă, ăслă та пултаруллă, таса чунлă, ырă кăмăллă ӳстерме тăрăшать. Çав вăхăтран хăйсенчен телейлĕрех, савăнăçлăрах, пуянрах пурăнтарасшăн тăрăшать. «Ашшĕ-амăшĕн пехилĕнчен тухакан çыннăн пархатарĕ çук», – тесе ахальтен каламан. Çавăнпа эпĕ те атте-анне сăмахне куллен ăша илме тăрăшатăп, анне пек сăпайлă, вашават, ĕçчен тата атте пек хăюллă, харсăр, тӳрĕ кăмăллă пулма ĕмĕтленетĕп.

Атте-анне пурри – телей. Хама çуратса ӳстернĕ çынсенчен пахи никам та çук. Чун панă, ăса вĕрентнĕ, ĕçе хăнăхтарнă, пурнăç çулĕ çине тăратнă хаклă çынсен умĕнче пуçăма таятăп. Пурнăçăмри чи çывăх çыннăмсене нихăçан та чĕререн кăлармастăп. Вĕсемшĕн эпĕ яланлăхах ача-пăча – пĕчĕк чухне те, ӳссе çитĕнсен те, вăтам çулсенче те. Манăн кашни утăм, кашни ĕç – вĕсен куçĕ умĕнче. Тĕрĕс те лайăх утăмсем çывăх çыннăмсене савăнăç кӳреççĕ, тĕрĕс мар утăм туни вара – хурлăх. Çавăнпа та атте-аннене савăнтарма кăна тăрăшмалла, вĕсене нихăçан та кулянтарас марччĕ, пурнăçра куллен пулăшса пырасчĕ.

Чăвашсен паллă ăсчахĕ Г.Н.Волков академик та çапла каланă: «Аннесем пур чух пурăнатпăр-ха». Чăнах та, аттеанне тĕрекне эпир вĕсем пурăннă чухне кашни кун туятпăр. Çав тĕреке вара хамăр ывăл-хĕрсене халаллатпăр. Çапла ăруран ăрăва куçать атте-анне ăшши, пехилĕ.

Ахальтен мар вăл: «Халăх вĕрентĕвĕнчи тĕп сăнар – анне. Ырă çемьере ырă çын ӳссе çитĕнет», – тенĕ. Çак тĕнчипе паллă ăсчахăн амăшĕ те çапла каланă: «Ял-йышпа, ачасемпе çапăçман. Тĕрлĕ ĕç-пуçа саламатпа мар, ырă сăмахпа хавхалантарса вĕрентсе пынă. Ачисем ашшĕамăшĕн сăмахĕсенчен иртмен. Çынпа килĕштерсе пурăнма юратнă эпĕ, ачасене те çаплах ăс панă. Кирек кама та яланах ырă суннă, уншăн Турă хăй мана ырă тăвать. Ним те ахаль иртмест, ырă туни – уйрăмах…»

Геннадий Никандрович хăйĕн амăшне чи ачаш туйăмпа чунтан юратнă, хисепленĕ. Çакна вăл хăйĕн 70 çулхи юбилейĕнче пĕтĕм халăха пĕлтернĕ.

«Сцена çинчи çемçе пукан çине лартрĕç Геннадий Никандровича. Анчах та вăл сцена çинчен анчĕ те залра ларакан амăшне çавăтса хăпартрĕ, çав çемçе пукан çине лартрĕ, пуçне унăн чĕрçийĕ çине хучĕ. Альтук аппа ывăлне пуçĕнчен ачашларĕ. Залра ларакан халăх шăп пулса тимлĕн сăнарĕ. Аслă çулсенчи çынсен куçĕсем шывланчĕç», – каласа пачĕ пире вĕрентекен.

2010-мĕш çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче Аслă Вĕрентекенĕмĕр хăйĕн тăван шкулĕнче пулчĕ. Çак кун пирĕн шкулта «Ăслăлăхпа практика конференцийĕ» иртрĕ. Хăнасем питĕ йышлăн пухăнчĕç. Уява хутшăнакансем паллă академикăн, этнопедагогăн пурнăç çул-йĕрĕпе утса тухрĕç тейĕн.

Сывпуллашас умĕн Геннадий Никандрович пурне те пил пачĕ: «Эпĕ сире юрататăп. Пурнăçăрта чи малти вырăна ачăрсене, çемьене, мăшăра кăларăр. Каччăсем, çемье çавăрсан ĕç хыççăн кил алăкне яри уçăр та: «Турăçăм, эпĕ сире епле юрататăп», – тесе калăр. Ан манăр, арçын вăл – патша, хĕрарăм – турă», – терĕ. Мĕн тери ăслă сăмахсем.

Г.Н.Волков пирĕн шкулта пулни, унпа иртнĕ тĕлпулу яланах асăмра упранĕ. «Кашни çыннăн е уйрăм халăхăн шăпине висĕ юрату татса парать – ачасене юратни, ĕçе юратни тата Тăван çĕршыва юратни», – тесе çырнă Г.Н.Волков хăйĕн пĕр кĕнекинче.

Геннадий Никандрович пирĕн хушăра çук ĕнтĕ. Апла пулсан та унăн сăнарĕ халăх асĕнче упранĕ, пил сăмахĕсем пире малашне вĕренме вăй-хал парса тăрĕç.

Пирĕн, çамрăк ăрăвăн, чăваш аваллăхĕпе çул-йĕрне ăнланса, чăваш ятне татах та çӳллĕрех шая çĕклеме тăрăшмалла. Хамăра чăннипех те аслă Чăваш Енĕн çынни темелĕх тивĕçлĕ пуласчĕ. Тăван çĕре, тăван кĕтесе яланах асра тытасчĕ. Çапла пултăрччĕ!

***Ольга ПИТАКОВА.***

Елчĕк районĕ,
Аслă Елчĕк.

# Ачасен ĕç бригадисен фестивалĕ



Сентябрĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарти Ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн керменĕнче Ачасен ĕç бригадисен республика фестивалĕ иртнĕ. Унта республикăри вунçичĕ муниципалитет учрежденийĕнчен ачасен ĕç бригадисем вунтăххăррăн хутшăннă, пурте вĕсем – муниципалитет çĕнтерӳçисем.

Фестиваль уçăлнă май уява пуçтарăннисем ĕç бригадисен çуллахи вăхăтри çитĕнĕвĕсене сăнлакан куравпа паллашнă. Савăнăçлă линейкăна ЧР Вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн заместителĕ Сергей Кудряшов хутшăннă, ачасене саламласа малашне те çĕнтерме, пысăк кăтартусемпе савăнтарма суннă.

«Манăн хаваслă çемье» вăйăпа мероприяти малалла тăсăлнă. Ăна республикăри «Çулталăк вожатăйĕ-2015» конкурса хутшăнакансем ирттернĕ. Вĕçĕнче вара ĕç бригадисем хăйсен пултарулăх хăтлавĕсемпе паллаштарнă.

Фестиваль тапхăрĕсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн 3 номинацире çĕнтерӳçĕсене палăртнă.

**«Курав стенчĕ»:**
1 вырăн – «Ĕç хуралĕ» /Пăрачкав районĕ/;
2 вырăн – «Шăмăршă.ru» /Шăмăршă районĕ/;
3 вырăн – «БЭМС» /Патăрьел районĕ/.

**«Станцисенчи вăйă»:**
1 вырăн – «Çăлавçăсем» /Шупашкар районĕ/;
2 вырăн – «Патриот» /Йĕпреç районĕ/;
3 вырăн – «Актив» /Шупашкар/.

**«Пултарулăх хăтлавĕ»:**
1 вырăн – «Кăткă» /Улатăр/;
2 вырăн – «Шăмăршă.ru» /Шăмăршă районĕ/;
3 вырăн – «Ĕç десанчĕ» /Етĕрне районĕ/.

Çĕнтерӳçĕсене ЧР Вĕренӳ министерствин дипломĕсемпе тата хаклă парнесемпе чысланă.

**Ăçта кăна ан çит, тăван çĕре асра тыт.**

ÇУЛÇŸРЕВ

# Умра – инçет



**Хамăн тĕп ĕçри отпуск кунĕсене ахаль, ним тумасăр ирттерес марччĕ текен шухăш çирĕпленсе çитрĕ.**

Иртнĕ юлашки икĕ çулта аякри тăрăхсенче пулма тиврĕ. Авточарăну /автостоп/ мeслечĕпе Тăван çĕршывăн пысăк утравĕсенчен пĕрин çине Сахалина та çитрĕм. Çутçанталăк пуянлăхĕпе чапа тухнă утрав тĕлĕнмелле хитре! Унăн çыранĕсене Япони тата Охотски тинĕсĕсем хăйсен хумĕсемпе лăпкаççĕ. Тепĕр чухне вĕсене тинĕссен хăватлă хумĕсем самаях силлеççĕ те. Утрав ячĕ те тĕлĕнмелле пулса кайнă. Амур юханшывĕн маньчжурла ячĕ – «Сахалян-Улла». Çак чĕлхерен куçарсан «Хура юханшывăн чул хысакĕсем» тени пулать ĕнтĕ вăл. Тĕлĕнмелле ят. Кунта курса çӳрени пирки эпĕ «Тантăш» хаçатпа «Самант» журнал тусĕсене хăйсен юратнă кăларăмĕсенчен пĕрисенче каласа панăччĕ те. Çулçӳревре тунă сăнӳкерчĕксемпе те паллаштарнăччĕ.

Хальхинче вара Азие велосипедпа çула тухас шухăш тĕвĕленчĕ. Нумай хулапа яла курас, сăрт-тусен илемĕпе паллашас, çутçанталăк капăрлăхĕпе савăнса килес, уй-хир пуянлăхне, çеçенхирти вăштăр çилĕн пăшăлтатăвне туяс туртăм чылайранпа канăç паманранах пухăнса пычĕ çак илĕртмĕш ĕмĕт. Ку çеç те мар пуль. Хамăн тĕп ĕçпе çыхăнни ытларах вăй илни те хистерĕ инçе çула тухма. Нумай-нумай хула çурчĕсен архитектурине курса савăнас, вĕсен илемне куç умĕнче тытас килнĕрен, мăнаçлă çĕршыври паллă çынсен тăрăхĕсенче пулнине яланлăхах асра хăварас тĕллевпех çула пуçтарăнтăм. Умра – инçет. Пире, виçĕ уйрăлми туса, Сăрт-туллă Алтай, Монголи, Китай… чĕнет. Вăхăт тивĕçтерсен – Тибет, Вьетнам, Лаос, Таиланд, Индонези. Тен Австралие те çитме май килĕ.

***Евгений ФЕДОРОВ, архитектор.***

Санкт-Петербург – Шупашкар.

**СĂНӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** Сăртлă-туллă Алтай илемĕ – куç тулли; Çак йĕркесен авторĕ /сулахайри/ тата çулташĕ.

*/Çулçӳрев материалĕсемпе «Тантăшăн» çитес кăларăмĕнче паллашăр/.*



ПРЕЗЕНТАЦИ



# Пĕчĕккисен тусĕн черетлĕ парни

«Пĕчĕккисен чунĕ çине куллен сиплĕх тумламĕ ӳкейсен этемлĕх обществи нихăçан та пăскăнчăк енне сулăнас çук», – вулатăп Николай Ишентей хăйĕн çĕнĕ кĕнекин хыçалти хуплашкинче çырнине. «Шăнкăрав хыççăнхи уроксем» – çыравçă пĕчĕк вулакансене валли хатĕрленĕ черетлĕ «чун апачĕ». Шăпах çак кĕнекен хăтлавне пуçтарăнтăмăр та И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн акт залне.

Николай Петрович Ишентей – ача-пăчан хисеплĕ тусĕ. «Çулталăк кĕнеки» конкурсра вăл тăватă хутчен çĕнтернĕ. Унăн сăввисене паллă композиторсем юрра та хываççĕ. Кĕнеке хăтлавне пуçтарăннисем çавăн пек юрăсенчен пĕрне, «Пурнăç урапи» ятлине итлесе киленчĕç, ытарлă йĕркесен тарăн шухăшне тăнларĕç. Николай Петровичăн пултарулăхне хаклама хисеплĕ те паллă çынсем сăмах илчĕç.

Вĕренӳ институчĕн доценчĕ Н.Г.Иванова, çак кĕнекене йĕркелекенсенчен пĕри, Николай Ишентей сăввисене вĕренӳ кĕнекисене те чылай кĕртнине палăртрĕ.

– Николай Петрович тĕрлĕ жанрпа çырать. Унăн хайлавĕсенче ытти çыравçăсен çук темăсем аталанаççĕ. Пĕр вăхăт шкулта учитель пулса ĕçленĕ май вăл çав темăсене аван ăнланать, – терĕ Надежда Григорьевна.

И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ О.В.Скворцова «Шăнкăрав хыççăнхи уроксем» кĕнекене халалланă презентаципе паллаштарчĕ. «Чăн-чăн литература – этем пархатарне хӳтĕлекен хатĕр», – вулатпăр Н.Ишентей сăмахĕсене.

– Çак сăмахсем Ишентей пултарулăхне туйса, ăнланса илме май параççĕ, – терĕ Ольга Владимировна.

Презентацире çĕнĕ кĕнеке çинчен каланисĕр пуçне Николай Петрович пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе те паллаштарнă. Ку кĕнекене 1 повесть тата 17 калав кĕнĕ. Ишентей хайлавĕсен тематики, проблематики анлă. Кашни хайлаврах тĕрлĕ задача пурнăçланать. Халăхăн йăли-йĕркисем те тĕпре. Ача-пăча сăвăçин хайлавĕсенче фольклор туйăмĕ пысăк пулнине палăртрĕ Ольга Владимировна. Нумай ăслă йĕркесем илсе кăтартма пулать. Витлешӳ такмакĕсен тĕслĕхĕсем те пур. Çакă сăвăçăн хайлавĕсене татах та пуянлатать. «Ывăл-хĕр тăван халăхне пархатар кӳрсен ку халăх вилĕмсĕр» йышши йĕркесем ĕмĕрсем хушши çынсен асĕнчех пурăнĕç.

Кăçал К.В.Иванов çулталăкĕ пулнă май И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ Виталий Григорьевич Родионов Ишентей пултарулăхне Иванов куçĕпе хаклама кăмăл турĕ.

– Поэт малтан куçарать, кайран оригиналлă япаласем çырать, философиллĕ япаласемпе ĕçленĕ хыççăн ача-пăча литератури çине куçать. Ачана вĕрентнинчен хаклăрах япала ним те çук. Ишентее те учитель ĕçне пĕлни ача психологине ăнланма пулăшать. Çеçпĕл пек те, Иванов пек те, Ишентей пек те никам та çыраймасть, – терĕ вăл.

Галина Алексеевна Ермакова профессор Ишентее пĕрре курсах унра темĕнле тарăнлăх пуррине туйса илнĕ. Ахаль çын пек кăна вăл, анчах чăваш халăхĕн тарăнлăхне вулакан патне çитерет иккен. Николай Петровичăн хăватлă сăмахне таджиксем те куçарусăрах ăнланнине пĕлтерчĕ Галина Алексеевна. Ют çĕршыв студенчĕсене вĕрентнĕ май Ишентей кĕнекисенче те вĕсене мĕн вуласа памаллине тупать вăл.

Ирина Владимировна Софронова доцент поэтăн хуть те хăш хайлавĕнче те приключениллĕ сюжет аталаннине палăртрĕ.

А.И.Мефодьев доцент та Ишентей питĕ тухăçлă ĕçленине ырларĕ. Унăн кĕнекисенчи геройсенче – чăваш ачисенче – халăхăмăрăн пултаруллă енĕсем пурте пуррине асăрханă вăл.

– Ачасен калаçăвĕ урлă сăнара уçса пама чылай çăмăлрах, – терĕ Ишентей хăйĕн пултарулăхĕн вăрттăнлăхне кăштах уçнă май.

Çапла, тĕрĕсех каларĕç хисеплĕ хăнасем – ачасене валли çырас пулсан вĕсем пек туймалла та, шухăшламалла та, тĕнчене те ачалла курмалла. Пĕчĕккисемпе ĕçлесе курман çын çакна ăçтан ăнлантăр? Николай Петровича ахальтен мар ачасен тусĕ теççĕ пуль çав.

Кĕнеке хăтлавне пуçтарăннисем унăн авторне ырми-канми ĕçĕ-хĕлĕшĕн тав турĕç, малашне те ăнăçу сунчĕç. «Шăнкăрав хыççăнхи уроксем» кĕнеке вулакана хăйĕн асамлă тĕнчине çавăрса кĕресси иккĕленӳсĕр.

***Лариса ПЕТРОВА.***

Çула тухсан юлташу хăвăнтан аван пултăр.

1-мĕш стр.

# Мăнукăмсем – чун уççи

### Утаймасан та... упаленме пултаратăп-çке, аннеçĕм

Хăш чухне хăй сисмесĕрех ассăн сывлать Юлия кинеми. Çакна курсаилтсе тăракан хĕрĕ ун çине ăшшăн пăхать те:

– Анне, мĕншĕн кулянатăн? Эпĕ санпа юнашарах вĕт. Кунтан ытла тата мĕн кирлĕ пире? – тет.

– Тĕрĕсси тĕрĕс-ха... Çапла, эс куллен юнашар, анчах утаймастăн-çке... Урамра ыттисем пек çўрейместĕн. Ак халĕ, çак вăхăтра, кăкăрта тем сыщса хăпарнă пек, тан тапнă пек тапса, ыратса килчĕ. Тулса ларнă ăш-чикĕме уçмашкăн уласа йĕрес килет, анчах куçран пĕр тумлам та пăчăртанса тухса ăшри асапа сĕвĕртесшĕн мар, – каллех ассăн сывлать Юлия Васильевна тутăрне тўрлеткеленĕ май.

– Анне, эпĕ хамăн шăпапа çырлахнине пĕлетĕн-çке... Çитменнине унччен алла патак тытса уткаласа çўренĕ, кăçал çеç хăрах ура итлеми пулчĕ. Сылтăмми лайăххах, сулахаййи çеç чăрмав кўрет. Çапах та аптăрамастăп вĕт-ха, упаленетĕп. Хăвах куратăн, кирек епле ĕç-пуçа та пурнăçлама тăрăшатăп. Анне, тен, ман çине те пĕр кунхине хĕвел ăшшăн çутатĕ, – лăплантарма тăрăшать хĕрĕ амăшне.

– Ачам, ăнлан мана... Эпĕ сана хам варта тăхăр уйăх йăтса çўренĕ, кăкăр çитернĕ, çупăрланă, юратнă, ачашланă... Пурнăçра ыррине çеç суннă, ватăлсан хама пулăшакан пулать тесе ĕмĕтленнĕ... Чипер пурăннă чухнех инкекĕ ура айĕнчен сиксе те тухрĕ вĕт-ха... Çакăншăн чĕре тўсмелле мар ыратать. Шалта, ăш-чикре те вут хунăн тем çунать, çунать. Хăш чух, ыйхă килмен каçсенче, шухăш çăмхи сўтĕлет те сўтĕлет, таçта та илсе çитерет вăл мана, – тет амăшĕ çаплах хĕрĕ еннелле тинкерсе.

– Анне, тепĕр хут калатăп. Ан кулян... Пулнинчен иртеймĕпĕр ĕнтĕ, нимĕн те тăваяс çук. Юрать тепĕр хĕрўпе мăнукусем пур. Таньăпа ачисем кунта килсен эпĕ çеç мар, эсĕ те чунтан савăнатăн-çке. Куçусем çуталаççĕ, ачаллах хĕпĕртетĕн. Вĕсене тутлисем çитерес тесе чупкалатăн. Хăйсем те алă усса лармаççĕ авă, пулăшса хăвараççĕ. Тата та пахи, икĕ мăнуку та сан тавралла тĕпĕртетсе те юратса: «Анне», – тесе чĕнеççĕ. Сарă чĕпсемпе танлаштаратăп эпĕ Сашăпа Ромăна. Вĕсем пирĕншĕн – ылтăн чăмаккисемçке, анне! Çапла вĕт! – терĕ çаплипех амăшне лăплантарма тăрăшнă май.

### Валерий Раштав сăвăçпа паллашни

Эх, чăваш хаçат-журналĕ те чун уçси Надьăшăн. Киввисене те таçта кăларса пемест, кашнине типтерлĕ пухса пырать. Ара, пĕр материала вăл кăшт вăхăт иртсен каллех вулать-çке.

Виçĕ çул каялла алла «Самант» журнал тытни аса килчĕ ăна. Тĕрлĕ кăсăклă материал вуланă хыççăн Валерий Раштав сăвăç пултарулăхĕпе те кăмăлтан паллашрĕ. Тарăн шухăшлă, чуна пырса тивекен сăввисемпе паллашсан хăй инкекĕ пирки пуçĕпех манчĕ хĕр.

– Çапах та, курса калаçас килет манăн çав хастарпа. Анчах ăстан шыраса тупмалла ăна? Эпĕ уншăн ют çын вĕт. Аппăшĕ те, йăмăкĕ те мар... Çитменнине пĕр-пĕринпе нихăçан та тĕл пулман, – тесе сăвăç сăнўкерчĕкĕ çине темччен пăхса ларчĕ, сăввисене те темиçе хут вуларĕ.

...Пурăнас кун-çул килмĕ ик хутчен,
Ырă ят кăна пултăр пирĕнтен.
Нумайăи пĕтет, сахалли çитет.
Мĕн пуррипе çырлахма тивет.
Уйрăмах çак сăвă чунне пырса тиврĕ унăнне. Кусĕнче те куççуль пăчăртанчĕ. «Çапла... Тĕрĕс сăмахсем... Мĕн пуррипе çырлахма тивет. Хам пирки каланăн туйăнать», – терĕ сасăпах. Çапла Надя темиçе кун Валерий Раштав пирки шухăшларĕ. Вăл шăрçаланă йĕркесем нимепле те пусĕнчен тухма пĕлмерĕç-çке. Пĕр кунхине уншăн калама çук савăнăç пулчĕ. Вăл Валерий Раштавăн телефон номерне тупма пултарчĕ-çке. Шăнкăравларĕ, унăн сăввисем чун-чĕререн килĕшнине пĕлтерчĕ.

– Сирĕнпе куçа-куçăн калаçас та килет. Эсир хирĕç мар пулсан паллах, – терĕ Надя кăмăлтан.

Валерий Раштав ăçта пурăннине каларĕ, хăй патне йыхравларĕ. Надя çав тери хĕпĕртерĕ. Вăл çийĕнчех машина тупса Кўкеçри ваттисемпе инвалидсен çуртне вĕçтерчĕ. «Чим, ку хастар арçын ачана ашшĕпе амăшĕ мĕншĕн кунта хăварнă-ши?» – тесе çул тăршшĕпе шухăшласа пычĕ.

Валерий вырăнпах вырттнине курсан Надя çав тери кулянса ўкрĕ. Каччăпа та пысăк инкек пулнине ăнланса илчĕ. «Эпĕ Валеркăна шкул ачи тесе шухăшланă. Иккен хампа тантăш çын», – терĕ хăйпе калаçса.

– Нихăçан та пусна ан ус, Надя, пурнăç пĕрре çеç килет. Темле йывăр пулсан та малаллах талпăнмалла. Ĕмĕтĕллев патне кармашмаллах, – тени вăй-хăват кĕртрĕ те Йăлмачча хĕрне.

Сăвăç патĕнчен пĕр кулянса, пĕр хавхаланса тухрĕ вăл.

– Чăнах, эпĕ туяпа утма пултаратăпха. Апла пулсан мĕншĕн пуса усмалла? Авă, манран йывăр шăпаллисем те пурнăçа мĕн тери юратаççĕ, – терĕ шухăша путса.

Çакăн хыççăн час-час шăнкăравласа калаçрĕ Надя хастар сăвăçпа. Паян та туслă çыхăнура. Кирек хăçан та чунĕсене пусариччен пуплеме пултараççĕ.

### Юрамасть чарăнма çур султа...

Куллен пысăк ĕмĕтпе пурăнать Надя. Унăн унччен хиллех утса-чупса çўрес килет-çке! Тухтăрсем те ура çине тăрас шанчăк пур тесе калани те хăпартлантарать ăна.

– Анне, Совет Союзĕн Геройĕ Алексей Петрович Маресьев пирки пĕрре мар каласа кăтартнă сана. Вăл вăрçă вăхăтĕнче, урисене çухатнăскер, ниме пăхмасăр каллех самолетпа вĕçнĕ. Наймăшман. Тăшмансемпе кар тăрса кĕрешнĕ. Паттăрлăхĕпе палăрса ирсĕр нимĕçсен самолечĕсене тĕп тунă. Унăн пултарулăхĕ, хăюлăхĕ мана тĕлĕнтерет те, хавхалантарать те. Малалла çитĕнўсем тума пулăшать, – тет вăл час-час амăшне.

Кирек хăçан та Надя ĕçсĕр ларма юратмасть. Пур çĕрте те сакăр теçетке урлă каçнă амăшне пулăшма тăрăшать. Амăшĕ сурăх çăмĕ касать, таптарать, пĕтĕрет. Надя вара алса-чăлха, кофта çыхма ăста. Кукăль-çăкăр пĕçерме те ўркенмест вăл. Хĕл хырăмĕ аслине шута илсе тĕрлĕ салат тăвать.

– Аннене ытлашши ĕçлеттерес килмест манăн. Кăçал çĕрулми кăларма илсе тухмарăмăр ăна. Пиччепе инкĕмĕрех кăштăртатрăмăр. Вăл кăларчĕ, эпĕ пуçтартăм. Çынна чĕнес темерĕмĕр. Ара, шултăрипе вăрлăха уйрăм пухмалла-çке. Пĕчĕккĕн, васкамасăр тăрмашрăмăр. Тата тепĕр чун ыратăвĕ пурха манăн. Питĕ газ кĕрттересшĕнччĕ эпир, анчах çырмара пурăнатăр, кунта май çук терĕç те пире... Чĕре хурланчĕ. Ара, сакăр теçетке урлă каçнă аннене кашни кун кăмака хутма çăмăл мар-çке. Хамăра çăмăлтарах пултăр тесе кашни çул суртарнă вутă туянатпăр. Анне кăмака умне пымассерен: «Эх, çынсем пек газлă пулаймарăмăр, ир те каç упранакан ăшша туйса кураймарăмăр», – тесе кулянать çав. Хĕллесерен пирĕн тĕле юр хўсе каять, трактор хырмасть. Тĕрĕссипе картишĕ çырмара пирĕн, пўрчĕ сăртра ларать. Çўлтен упаленсе анатăп вара çулласерен пахча çумлама е мунча кĕме. Çавăн чухне те Валерий Раштав сăвви аса килет вĕт-ха.

...Ăсатма тух эс, хĕвелĕм.
Кăмăл çук ман ларма вырăнта.
Пурнăçлантăр тесен çут тĕллевĕм,
Юрамасть чарăнма çур султа, – тет Надя. – Çак йĕркесем тепĕр ĕçе пурнăçлама та хистеççĕ мана. Вăрçăра хыпарсăр çухалнă асаттепе кукаçи шăпи кăсăклантарать. Ку ыйтупа Канашри çар комиссариатне шăнкăравларăмха. Хальлехе тататăклăн нимех те калаймарĕç. Анчах шанчăкпа пурăнатпăр-ха. Ара, темиçе çул иртсен те вăрçăри салтак шăм-шакне тупса тăван тăрăхне илсе килсе пытарни пирки пĕрре мар хаçатра вуланăччĕ, радиопа та илтнĕччĕ.

### Сашăпа Рома — чун йăпатмăшсем

Сашăпа Рома Павловсем кукамăшĕпе Надя аппăшĕн вĕрентсе каланă кашни сăмахне асра тытаççĕ. Шкулта та аван ĕлкĕрсе пыраççĕ. Куршанакĕ те вĕсен çумне авă ир çыпçăннă. Кирек епле ĕçре те вăр-вар.

– Надя аппа час-час ăс панăшăн савăнатăп. «Ачамсем, сăмаха нихăçан та шухăшламасăр пат персе яма юрамасть. Ватăла вата пек, çамрăкпа çамрăк пек калаçмалла. Хăшĕ-пĕри евĕр вĕçкĕн ан пулăр. Йывăрлăха лекнĕ çынна алă парăр, пăрăнса ан иртĕр. Пирĕн йăхра аппа-каппа çын пулман, нихăшне те усалпа, ырă мар тесе асăнман. Халĕ вара сирĕн тĕслĕх вырăнĕнче пулмалла. Уроксенче вĕрентекен ăнлантаракан темăсене ăша хывмалла, вĕренўре «4» тата «5» паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пымалла. Пурнăçăн анлă сукмакĕ çине çирĕппĕн тăрас тесен питĕ нумай тăрăшмалла. Çăкăр çиес тесен лайăх вĕренмелле. Сывлăхлă пулас тесен спортпа туслашмалла», – тенине унран час-час илтме пулать. Çавăнпа тăрăшатăп. Уйрăмах спортра хастар эпĕ. Акă кĕркуннехи çăмăл атлетика кросĕнче хамăр ўсĕмри ачасен хушшинче 1-мĕш вырăна тухрăм. Ку хыпара килтисене пĕлтерсен мĕн тери савăнчĕç. Ўсем-ха, пур çĕрте те палăрма тăрăшăп. Кайран тĕнчипе паллă футболист пулас килет. Юратнă тăванăмсене укса-тенкĕпе те пулăшнă пулăттăм, – тет иккĕмĕш класра вĕренекен хастар та ырă кăмăллă Рома.

Калаçтарсан, тем пирки те каласа пама юратакан Сашенька та сатур. Кукамăшĕпе Надя аппăшĕ патне куллен çўрекенскер урай, кашăк-чашăк çăвать, тусан шăлать.

– Качака путеккисене ачашлама çеç мар, ĕмкĕчпе сĕт ĕçтерме те юрататăп тата! Пĕчĕкскерсем мана курсанах хирĕç ыткăнаççĕ. Чăрсăрсем алла тытнă юратнă «Тантăш» хаçата пĕррехинче чутах чăмласа ямарĕç. Юрать туртса илме ĕлкĕртĕм. Ара, Надя аппа кашни кăларăмне типтерлĕ упраса пырать. Хаçат-журнала çурнине курсан е ăна унта-кунта пăрахсан – ятлать. Уншăн çиллленместĕп, мĕншĕн тесен тĕрĕс асăрхаттарать-çке вăл. Е тата тепĕр пулăм. Пĕррехинче пирĕн картише чее тилĕ кĕнĕ. Какай çиме ĕмĕтленнĕскер чăхсене шуйхатма тытăннă. Талпăнса вĕрекен йытта çыртса илнĕ вăл, пĕр чăхне те çаклатса тарма хăтланнă. Атте хăваласа çитнĕ хайхискере, йытăпа иккĕшне миххе чиксе таçта илсе кайрĕç. Вăрманта кăмпа-çырла пуçтарма юрататпăр та Надя аппа: «Тилĕсенчен асăрханса çўрĕр, тархасшăн, урнăскерсем çыртса илĕç те хăвăр та чирлесе кайăр. Е тата сире вăрмана каймасан та юрать. Çырла-кăмпасăр пурăнма пулатех. Çăкăрсăр вара – çук. Чи кирли – сĕтел çинче куллен çăкăр пултăр», – терĕ. Кашни утăмра вăл пире ăса вĕрентсе калани савăнтарать. Çакă пурнăçра йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать. Е тата яланах «Тантăш» хаçатпа туслă çыхăнура пулма сĕнет. Редакцие материалсем яма хистет. Эпĕ Надя аппа сăмахĕнчен иртместĕп, ăна манăн пĕрре те кулянтарас килмест. Унăн питкусĕ яланах кулăпа ялкăштăр тесе вăл мĕн каланине йăлтах пурнăçлатăп, – тет мал ĕмĕтлĕ Сашенька.

### Анне, Надя аппа... Эпир сире юрататпăр!

Картиш ĕнче, пўрт çумне вырнаçтарнă сак çинче тăватăн: Юлия Васильевна, Надя хĕрĕ тата Сашенькăпа Рома мăнукĕсем хĕвел ăшшине тухса ларчĕç. Арçын ачапа хĕрача шкул пурнăçĕ пирки, малашнехи тĕллевĕсем çинчен пĕрпĕрне пўлсе калаçнине Юля аппапа Надя савăнсах итлесе ларчĕç.

– Надя, çаксене пăхса ларнă май иртни куç умне килет. Эсир пиччўпе иксĕр çаплаччĕ. Ак кунтах чупса-выляса çўреттĕр, кун мĕнле иртнине каласа пама кăмăллаттăр. Сарă кĕркуннесерен урамри хурăн сулхăнĕпе килексе, тўшек пек сарă-хĕрлĕ çулçăсем çинче тăсăлса выртса тиха пек йăвалантăр, – терĕ Юля аппа шухăша путса.

– Анне, маншăн ан пăшăрхан, тархасшăн, чĕрўне ан ыраттар. Ак итле, Валерий Раштав сăввине.

Çук-и кĕмĕлў – шутсăр ан хурлан.
Мĕн ырри пур-ши тăнăç пурнăçран?
Савăнса кĕтер, ай, кашни ире.
Турăçăм, парсам сывлăх çеç пире.

Эх, аннеçĕм, тĕлĕкре час-час утсачупса çўретĕп-çке эпĕ! Урасем те чиперех выляççĕ. Тăхта-ха, ку чăн мар, тĕлĕкре-çке тесе пушшех малалла васкатăп. Вăранса каятăп та – ассăн сывласа яратăп. Унтан каллех çывăрса кайма тăрăшатăп, каллех çав асамлă тĕлĕке курма ĕмĕтленсе куçсене хупатăп... Ах, чăн пурнăçра утса-чупса çўрес пулсассăн-и? Сăртра ларакан пўрт патне кунне темиçе хут чупса хăпарăттăм, кирек ăçта çитсе пурнăç илемĕпе киленеттĕм. Ах, аннеçĕм, пурнăçра нимĕнле мул та хаклă мар... Çын сывлăхĕнчен пахи нимĕн те çук», – терĕ Надя.

Çак хурлăхлă калаçу Сашенькăпа Ромăна пăлхатсах ячĕç. Иккĕшĕ те Надя аппăшĕпе кукамăшне ыталаса илчĕç. Пичĕсенчен вĕçĕмсĕр чуптунă май пăшалтăрĕç те пăшалтăрĕç:

– Аннеçĕм, Надя аппа... Эпир сире нихăçан та пăрахас çук, сире эпир питĕ хытă юрататпăр. Сирĕн ытамра ырă та ăшă пире, канлĕ те аван, – терĕç чунран тухакан сăмахсемпе.

– Эх, мăнукăмсем, чĕппĕмсем... Эсир маншăн чун уççисем-çке, – тесе хĕрĕпе мăнукĕсене хăй те çупăрласа юратрĕ.

*Элиза ВАЛАНС.*

Канаш районĕ,
Йăлмачча.

**Тĕнчере чи пĕчĕк телей – пуянлăх, чи пысăк телей – сывлăх.**

● ТĔНЧЕЛЕ






# Çĕнтерӳ шурăмпуçĕ

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен калаçнă чухне СССР тĕп хулине нимĕçсем мĕнле тĕп тума шут тытнине тăтăшах аса илеççĕ. Адольф Гитлер Мускав валли мĕнле шăпа хатĕрлени пирки эпир те аса илер.**

«Барбаросса» планĕпе килĕшӳллĕн, çиçĕмле вăрçăн – блицкригăн – вăраха пымалла пулман: Совет Союзне çапса аркатма 6 эрне çеç кирлĕ тесе шутланă. Мускавпа мĕн тăвасси пирки вара Адольф Гитлерăн шухăшĕсем тĕрлĕрен пулнă. Фюрерăн чи паллă «ĕмĕчĕ» Мускава шыв айне тăвасси: «Пысăк сооруженисемпе усă курса Мускавпа унăн тавралăхне шыв айне тума хатĕрленмелле. Паян Мускав тăракан вырăнта пысăк кӳлĕ пулса юлать, вăл вырăс халăхĕн тĕп хулине цивилизациллĕ этемлĕх куçĕнчен яланлăхах пытарать».

Гитлерăн çак сăмахне хăйĕн «Аса илӳсем тата шухăшланисем» кĕнекинче Совет Союзĕн маршалĕ Георгий Жуков илсе кăтартать. Фюрерăн Мускава шыв айне путармалли планĕсем çинчен асăннисем тата та пур. Çак тĕллеве пурнăçлама нимĕçсем И.В. Сталин ячĕллĕ Мускав-Атăл каналпа усă курма планланă-мĕн. Волоколамск çулĕ патĕнчи акведука сирпĕтсе ярсан Атăл шывĕ СССР тĕп хулине путарма пултарнă имĕш.

Чăнах та, Адольф Гитлер Мускав вырăнне кӳлĕ туса хуратпăр тесе темиçе те пĕлтернĕ. Шухăшĕ «хитре», нацистсен ĕмĕчĕпе килĕшӳллĕн пулнăран юри, ятарласа-хĕтĕртсе те калама пултарнă вăл çак сăмаха. Мускава шыв айне тăвас тенинче пропаганда сĕмĕ вăйлă: СССР тĕп хулине ахрат-тартар тĕпне антарса яни пекех!

Германин типçар вăйĕсен штабĕн пуçлăхĕ Франц Гельдер генерал-полковник 1941 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче кун кĕнекинче çапла палăртнă: «Фюрер Мускавпа Ленинграда çĕрпе танлаштармалла тесе ним иккĕленмесĕр татăклăн шутлать, унта пĕр çынна та хăвармалла мар, хĕлле вĕсене тăрантарасси ан пултăр… Икĕ хулана та аркатас тĕллеве авиацийĕн пурнăçламалла. Танксемпе усă курмалла мар. Халăх синкерĕ пулать ку, большевизма кăна мар, пур московитсене те центрсемсĕр хăварать çакă».

Июлĕн 8-мĕшĕ хыççăн нимĕç сывлăшçар вăйĕсем Мускава та, Ленинграда та бомбăлама тытăнман-ха. Тепĕр эрнерен, бомбардировщиксем Совет Союзĕн аслă хулисене çĕрпе танлаштарма халĕ те пуçăнманран, Гитлер йĕплесе тенĕ пек авиаци рейхсмаршалĕ Герман Герингран: «Мĕнле шухăшлатăр – Мускава вĕçме хăю çитерекен пĕр авиаэскадра та пулин пур-и люфтваффе?» – тесе ыйтнă.

Нимĕçсем Мускава июлĕн 22-мĕшĕнче бомбăлама пуçланă. Анчах люфтваффе Гитлер планĕсене пурнăçа кĕртме пултарайман. Кашни сывлăш тапăнăвне сахалтарах та сахалтарах самолет хутшăннă. Нимĕçсем Мускав патне мĕн чухлĕ çывăхарах пынă, çавăн чухлĕ ăна сахалрах бомбăланă.

Июлĕн 16-мĕшĕнче нимĕçсем «Мускав» рейхкомиссариат йĕркеленĕ, ăна ертсе пыма Зигфрид Каше СС обергруппенфюрерне /генералне/, СС тата полици пуçлăхне Эрих фон дем Бах-Зелевский СС обергруппенфюрерне лартнă. Абвер тытăмĕнчи /çар разведкинче/ Vorkommando «Moskau» ятлă малти отряда СС штандартенфюрерĕ /полковникĕ/ Франц Зикс ертсе пынă. «Мускав» ятарлă ушкăнăн СССР тĕп хулинче кирлĕ объектсене йышăннисĕр пуçне большевиксен çулпуçĕсене те тыткăна илмелле пулнă.

Тепĕр кăсăклă факта та пĕлтермелле. Лаврентий Берия хушнипе НКВД тытăмĕнче Павел Судоплатов ертсе пыракан «Ятарлă задачăсен уйрăмĕ» туса хунă. Нимĕçсем Мускава илес пулсан, тĕп хулана Гитлер килсен – Судоплатов отрячĕн хуть те мĕнле майпа та фюрера тĕп тумалла пулнă.

Мускава çĕрпе танлаштарасси çинчен Гитлер август уйăхĕнче, Борисов хулинче, çарсен «Центр» ушкăнĕн штабĕн канашлăвĕнче фон Бок генерал-фельдмаршала каллех асăрхаттарнă.

Октябрĕн 7-мĕшĕнче Гитлерăн çар советникĕ Альфред Йодль генерал-полковник генштабăн оперативлă управленине вăрттăн распоряжени янă. «Мускавпа Ленинград капитуляцине, ăна тăшман сĕнсен те – йышăнмалла мар тесе фюрер каллех палăртрĕ. Çак мероприятие кăмăл-сипет енчен мĕнле пăхасси пур тĕнчешĕн паллă…

Эпидемисем сарăлас пысăк хăрушлăх сиксе тухассине шута илмелле. Çавăнпа çав хуласене пĕр нимĕç салтакĕн те кĕмелле мар. Хуларан каяс тесе кам пирĕн позицисем витĕр тухма пырать, ăна пемелле те каялла хăваласа ямалла. Хула çыннисене Раççее шалалла тармалли пĕчĕк хушăсем йĕркеленипе саламламалла кăна. Ытти хуласем валли те пĕр йĕркене пăхăнса пымалла: вĕсене тытса иличчен артиллери вучĕпе тата сывлăшран тапăнса аркатмалла, халăхне хăваласа ямалла.

Вырăс хулисене пушартан хăтарас тесе нимĕç салтакĕсен пурнăçне хăрушлăх кӳни е хула çыннисене Германи шучĕпе тăрантарни – питĕ явапсăрла хăтланни. Совет хулисенче пурăнакансем Раççее шалалла мĕн чухлĕ йышлăрах куçаççĕ, хаос Раççейре çавăн чухлĕ вăйланать те оккупациленĕ тухăç районĕсене тытса тăма, вĕсемпе усă курма çăмăлланать.

Фюрерăн çак кăтартăвĕсене пур командира та пĕлтермелле».

Тĕпчевçĕсем çырнă тăрăх, октябрĕн 12-мĕшĕнче Гитлер Мускавпа унăн тавралăхне шыв айне туса путарма ниепле май та çуккипе килĕшнĕ. «Мускав капитуляцине йышăнмалла мар, совет тĕп хулине çавăрса илмелле те вĕçĕмсĕр артиллери вучĕпе тата сывлăш тапăнăвĕсемпе тĕп тумалла», – тесе хушнă вăл. Çав вăхăтрах тата Хĕрлĕ площадьре вермахтăн çĕнтерӳ парадне ирттерессине йĕркелеме каланă. Нумай офицер парадра тăхăнмалли мундирне пĕрлех илсе çӳренĕ.

«Çĕнтерӳ уявĕ» валли мĕн кирлине Германирен эшелонсемпе турттарма тытăннă. Мускавра çĕнтерӳçĕ Гитлера чысласа лартмалли пысăк палăк валли те якатнă хĕрлĕ гранит тиенĕ эшелон Можайска çитсе чарăннă. Чулне вара Норвегиренех илсе килнĕ. /Можайска нимĕçсенчен хăтарсан фюрер палăкĕн пьедесталне каймалли гранит совет çарĕсене лекнĕ. Кайран Мускаври Горький урамĕнчи хăш-пĕр çуртсене çак чулпа витсе илемлетнĕ/.

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче Мукава илме вермахт «татăклă» наступлени пуçлать. Нимĕçсем тĕп хулана тытса илесси пирки иккĕленмен те. Акă мĕн çырнă фронтран пĕр нимĕç офицер-танкист: «Хаклă тетеçĕм, 10 минут каялла дивизи штабĕнчен таврăнтăм, унта эпĕ корпус командирĕн Мускава илме юлашки наступлени пуçласси çинчен калакан приказне кайса леçрĕм. Çак наступлени тепĕр 2 сехетрен тытăнать. Кремле пемелли йывăр тупăсене те куртăм эпĕ. Хĕрлĕ площаде, вĕсен Ленинăн вил тăприйĕ çумĕпе иртсе кайма хатĕрленнĕ пирĕн салтаксене те куртăм. Эсĕ пĕлетĕн, эпĕ туйăмсен тыткăнĕнчен хăтăлса çитеймен çамрăк мар, анчах та çакă – вăрçă вĕçĕ. Мускав пирĕн! Раççей пирĕн! Европа пирĕн! Васкатăп, штаб пуçлăхĕ чĕнет. Ыран сан пата Мускавран çырса яратăп…»

Нимĕçсен темиçе дивизийĕнче Мускав планне валеçсе панă. Пĕчĕк форматлă плана салтак кĕнеки ăшне хумалла тунă. Унта палăксене, парксене, театрсене, тĕп урамсене кăтартнă. Пĕр дивизире вара салтаксене Мускав тăрăх çĕрле çӳреме ирĕк паракан пропусксене те тыттарнă – «Германин хаярланнă ывăлĕсене» çапла хавхалантарнă.

Нимĕç çарĕсем Мускавра, Хĕрлĕ площадьре парад ирттерни питĕ кирлĕ, витĕмлĕ те курăмлă акци шутланнă. Гитлер шучĕпе, çак церемоние ноябрĕн 7-мĕшĕнче йĕркелени – чи ырри. Совет çарĕсем Мускав патĕнче наступлени пуçласан «Рейх» дивизийĕнчи офицерсемпе салтаксен çумĕнче ладунгскарттăсем – Мускаври парада курма чĕнекен йыхрав билечĕсене тупнă. «Мускава илнĕ! Çĕнтерӳ – пирĕн ялавсемпе! Тĕлĕнмелле чаплă фейерверк пулмалла. Пуçламăшĕ шăп 19 сехетре», – тесе çырнă унта. Йыхрав билечĕсенче нимĕç парачĕ хăш кун пуласса çеç кăтартман.

Мускаври «çĕнтерӳ уявĕн» сценарине Берлинта питĕ тĕплĕн хатĕрленĕ. Нимĕç салтакĕсем мăнаçлăн каçăрăлса çирĕп стройпа иртнĕ хыççăн Хĕрлĕ площаде тыткăна илнĕ большевиксен çулпуçĕсене конвойласа илсе тухмалла. Нимĕç саперĕсем вĕсен куçĕ умĕнче Кремль стенисене – совет халăхĕ нимĕçсене хирĕç тăнин символне – сывлăша сирпĕтеççĕ, ун хыççăн вара В.И. Ленин Мавзолейне – большевизм символне – аркатаççĕ. Мавзолей ишĕлчĕкĕсем çинче сухăрлă пĕренесенчен пысăк кăвайт чĕртсе Ленин мумине çунтарса яраççĕ. В.И. Ленин ӳтне кремацилесен мавзолей ишĕлчĕкĕсем çинче хăпартнă каштасенчен большевиксен çулпуçĕсене çакса вĕлереççĕ. Енчен те Иосиф Сталин нимĕçсен аллине лекнĕ пулсан – пуçтарăннă «çĕнтерӳçĕсем» умĕнче ăна мĕнле вĕлерни «Мускав уявне» вĕçлекен «хăватлă» эпизод пулмалла пулнă.

Çар парачĕ хыççăн çĕнтерĕвĕн Кремльти каçхи апатне чĕнекен йыхрав хучĕсене те пичетлеме манса кайман педант нимĕçсем.

Фашистсене Мускав патĕнчен хăваласа ярсан пĕр интендант складĕнче нимĕç çарĕсем Хĕрлĕ площадьре ирттерекен парадра тăхăнмалли мундирсене те тупнă.

Кашни эрнере тухса тăракан «Вохеншау» /Die Deutsche Wochenschau/ кинохроника нимĕç çарĕсем церемониллĕ маршпа Хĕрлĕ площадьпе иртнине малтанах ӳкерсе хунă. «Походпа – тухăçа» фильм вĕçĕнче «çĕнтерӳллĕ» çар Василий Блаженный храмĕ енчен Истори музейĕ патнелле – совет йĕркипе мар, кутăнла – утать. Вермахт салтаксем çуллахи тум тăхăннă, парад çу вĕçĕнчи е сентябрь пуçламăшĕнчи ăшă та уяр кун пырать. Гитлеровецсем Хĕрлĕ площадьри пек чул сарнă çулпа мар, асфальт тăрăх утаççĕ. Суя фильм ӳкернĕ чух нимĕçсем тĕрлĕ хроникăсемпе усă курнă. Çулсем иртнĕçемĕн çак фальшивка «документлă кино» шайне пиçсе çитессе иккĕленмен те Виççĕмĕш рейх ертӳçисем.

Мускава аркатмалли çакнашкал плансем пулнă нацистсен. 1941 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре совет çарĕсем ирттернĕ парада мĕншĕн стратегиллĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ çар операцийĕпе танлаштарнине чухларĕç ĕнтĕ «Самант» тусĕсем. Çав парадăн пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Вăл ирхине 8 сехетре пуçланнă. Парада Мускав çар округĕн командующийĕ Павел Артемьев генерал ертсе пынă, йышăнаканĕ – Семен Буденный маршал. Мавзолей трибуни çинче çĕршыв ертӳçисем тăнă. Тăван çĕршывшăн Çĕнтерӳ шурăмпуçĕ çавăн чухне килнĕ.

***Менгу ТИМУР.***

**Туссем, эсир "Самант" журнал çырăнма манман-и? Апла пулсан паян-ыранах почта уйрăмне васкăр.**

Тантăш 7
40 №, 2015, октябрь, 1

Вениамин ТИМАКОВ

# Сăмах илемне туйсан...

## (сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)

*(Малалли. Пуçламăшĕ 25-32, 34-39-мĕш номерсенче).*

Метафора йĕркеленнĕ чухне **пек, евĕр, манерлĕ, майлă** йышши танлаштару сăмахĕсем те тухса ӳкеççĕ.

Хурăнсене чарусăр çил лăскать
Е уртăнать сап-сар кăтрисенчен.
***(Н.Теветкел.)***

Ку тĕслĕхре поэт кĕрхи хурăнсен тăррине сап-сарă кăтра евĕрлĕ курать.

Хăш чухне сăвă пĕтĕмпех пĕр анлă метафора пулма пултарать. Сăмахран, Çеçпĕл Мишшин «Çĕнĕ Кун аки» сăввинех илер. Çĕнĕ пурнăç çыннине автор çĕнĕ ака пуçланнипе танлаштарать. Çавăн пекех С.Элкерĕн «Хурçă карап» сăввине те анлă метафора теме пулать. Карап – çĕршыв, унăн капитанĕ – Ленин.

Чĕлхере словарь метафорисем те йышлă. Вĕсем тĕрлĕ вăхăтра халăх чĕлхине кĕрсе çирĕпленсе юлнă: *сăмса* (карттус сăмси, кимĕ сăмси), *çăвар* (кăмака çăварĕ, нӳхреп çăварĕ), *хутаç* (кĕтӳç хутаççи – курăк ячĕ, пăрçа хутаççи) тата ытти те. Ку сăмахсен куçăмлă пĕлтерĕшне эпир туйсах та çитерейместпĕр.

Паллах, писателе пур метафора та çырлахтараймасть. Хăй калас текен шухăш, кăтартса парас текен ӳкерчĕк валли унăн çĕнĕ метафорăсем шырамалла. Метафорăсем тупасси кашни писателĕн хăйне евĕр стилĕнчен чылай килет. Поэт çĕнĕрен çĕнĕ метафорăсем тупать. Вĕсенче автор чĕлхин хăйне евĕрлĕхĕ палăрать.

Литературăра çакăн пек те пулать. Пĕр-пĕр поэт çĕнĕ метафора тупать (*сăмах çӳпçи* е *ăс вучахĕ* тейĕпĕр). Каярахпа ăна ытти авторсем çинеçинех усă кураççĕ. Вара çак метафора та кивелсе, шупкаланса юлать. Çапла ан пултăр тесен, çĕнĕ метафорăсем ытларах тупмалла, вĕсемпе вырăнлă усă курмалла, кивелнĕ метафорăсене произведенисене сахалтарах кĕртмелле.

Çыруллă поэзире метафорăсем час-часах тĕл пулаççĕ: «сенкер çатма – чикесĕр пĕлĕт; сар çу тумлакĕ – сар хĕвел...» *(Г.Кели)*, «Юман аттем! Эп – санăн йĕкелӳ» *(П.Хусанкай)*, «Уйăх тухнă тахçанах, уйăх – ылтăн кустăрма» *(И.Тукташ)*, «Кĕлетки ун – йăрăс хыр вулли» *(А.Воробьев)*, «Каçхи сăнавçă – катăк уйăх» *(Г.Орлов)*, «Чĕре эмелĕ – тăван халăх» *(А.Галкин)*.

**Аллегори.** Япала е пулăм пирки ытарлă калани аллегори (грекла – урăхла калас тени) пулать. Метафорăпа (ытарлăхпа) аллегори пĕр-пĕринпе питĕ çывăх. Анчах та ытарлăх метафорăран пĕр енĕпе уйрăлса тăрать: метафора произведенири пĕр-пĕр сăмах çаврăнăшне е строфана сăнарлă тăвать пулсассăн, аллегори пĕтĕм произведенипех ытарлă пĕлтерĕше сарать. Çакăн йышши произведенисенче фактсене, çынсене, пулăмсене тĕрлĕ чĕрчунсемпе ытти пулăмсем урлă кăтартаççĕ.

Ку тропсене эпир юптарусенче, тупмалли юмахсенче, сăвăсемпе калавсенче, повеçсемпе романсенче тĕл пулатпăр.

Тупмалли юмахсем: «Кăвакалĕ ишсех пырать, пăрĕ шăнсах пырать» (Пир тĕртни). «Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă» (Мăйăр). «Чунĕ çук, юнĕ пур» (Палан). «Лашаран çӳллĕ, курăкран лутра» (Пĕкĕ). «Пĕр чăланăн виçĕ кĕтес» (Хуратул).

Аллегорипе юптарусенче анлă усă кураççĕ. Вĕсенче çын сăнарне чĕрчун, вĕçен кайăк, ӳсентăран е ытти япала урлă кăтартаççĕ. Писатель, сăнара пĕр-пĕр япалан тĕп палли çине куçарса, ун пирки пĕтĕмлетӳ тăвать. Çавна май унăн чĕлхи кулăшла та витĕмлĕ. Акă, И.А. Крылов «Шăрчăкпа кăткă» юптарăвĕнче ĕçчен çынпа наян çыннăн сăнарне ӳкерет, кахала нимĕн шухăшсăр вĕççе çӳрекен шăрчăк паллисемпе питлет, ĕçчене кана пĕлми кăткă паллисемпе мухтать.

**Сăпатлантару** (олицетворени). Сăпатлантару тесе чĕрĕ мар япаласене, çутçанталăкри пулăмсене чĕрĕ чун пек е этем пек сăнласа кăтартнине калаççĕ.

Çăлтăрсем сӳнсе пытанса ларсан,
Сар хĕвел кулса выляса тухсан,
Çуралать Вольга Святославович,
Пĕр маттур ача, пĕр парка ача.
***(Былинăран.)***

Асăннă йĕркесенче çăлтăрсем чĕрĕ япала евĕрлĕ пытанса лараççĕ, сар хĕвел кулать, вылять. Сăпатлантару илемлĕ литературăра нумай тĕл пулать. Акă, К.В. Иванов «Нарспи» поэмăра çутçанталăк ӳкерчĕкĕсене сăпатлантарусемпе анлă усă курса сăрланă: «Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет, ешĕл тумтир тăхăнать. Çеçенхир те ешерет, илемĕпе мухтанать».

**Метоними.** Метоними (грекла – урăхла ят парас) тесе пĕр-пĕр япалана, унăн пĕлтерĕшĕпе усă курса, урăх япала урлă кăтартнине калаççĕ. «Вăл пĕр чашăк çисе ячĕ» тесессĕн, çын чашăк мар, апат çинине тӳрех ăнланатпăр. Çапла апата эпир ăна хунă савăта асăннипе те палăртма пултаратпăр.

Метонимисем тĕрлĕ мелсемпе пулаççĕ. Япала е ĕç вырăнне вĕсене тума пулăшакан япалана кăна асăнаççĕ. Сăмахран, «Кашкăра ури тăрантарать», «Унăн пуçĕ ăслă», «Вăл пуртăпа тăранса пурăнать».

Кĕнеке вырăнне писатель ятне калаççĕ: «Кăçал эпĕ Лермонтова вуласа тухрăм». Япали вырăнне ăна мĕнрен тунине калаççĕ: «Вăл ылтăн çакса çӳреме юрататъ». Пулăм е япала вырăнне вĕсен тĕп паллине палăртаççĕ: «Вĕсен пӳртне çутă кĕртнĕ», «Çакăн пек çумăр çунă хыççăн пур симĕс те ешерсе каять ĕнтĕ».

Пĕр-пĕр ĕçе е япалана калас вырăнне вăл ăçта пулнине кăтартаççĕ: «Пĕтĕм класс сочинени çырать», «Пĕтĕм уй юрлать».

Пĕр-пĕр паллăна унăн тулашри енĕсемпе палăртаççĕ: Ку хĕр япалах çутă çӳрет» («çутă» – «хаваслă» пĕлтерĕшпе). «Авăнмасăр çĕмел тума çук» («авăнмасăр» – «вăй хумасăр» пĕлтерĕшпе).

Метонимисемпе илемлĕ литературăра та, ахаль калаçура та анлă усă кураççĕ.

**Синекдоха.** Синекдоха – метонимин пĕр тĕсĕ. Ку троп пĕр-пĕр япала вырăнне унăн пайне каланипе пулать: «Паян манăн ĕç патне ал пымарĕ».

Тепĕр йышши синекдохăсенче пĕрреллĕ хисеп вырăнне нумайлă хисеп, нумайлă хисеп вырăнне пĕрреллĕ хисеп калаççĕ. Халăх чĕлхинче кунашкал тĕслĕхсем пайтах. Акă çын хăш ялтан е хуларан пулнине палăртас тесе çак формăпа усă кураççĕ. «Петĕр вăл – çĕнкассем», «Салам, Николай! Шупашкарсем хăнана килнĕ тем?» Нумайлă хисепе пĕлтерекен япалана пĕрреллĕ хисепре каласси чăваш чĕлхинче анлă сарăлнă. «Хулара çын нумай», «Ешĕл курăк хушшинче сап-сарă чечек ӳсет». *(К.Иванов.)*

**Гипербола** (грекла – ӳстерсе, пысăклатса кăтартни). Гипербола тесе пĕр-пĕр ĕçе, япалана, чĕрчуна е этеме чăн пурнăçринчен ытларах пысăклатса кăтартнине калаççĕ. Гипербола ахаль калаçура е литература произведенийĕнче калас шухăша е япалана сăнарлăн, палăртса, вăйлатса калама пулăшать. Ку троп тĕрлĕ халăх юмахĕсенче анлă сарăлнă: улăпсем, сăрт-ту пек çĕленсем тата ытти те. Çавăн пекех вăл былинăсенче, юрăсенче час-часах тĕл пулать.

К.В.Иванов «Нарспи» поэмăри «Вăрманта» сыпăкĕнче аслатиллĕ, тăвăллă çумăра сăнласа парас тесе гиперболăпа питĕ вырăнлă усă курнă: «Аça çапать, шартлатать, пĕтĕм тĕнче кисренет».

**(Малалли пулать).**

## Сар хĕвел

Пăхать хĕвел йăл-йăл кулса,
Халăха чунтан савса.
Хушать халĕ ыр сунса
Ĕç пуçтарма васкаса.

Кĕрхи кун пырать чупса,
Хăй тавра çупăрласа.
Хурсам ĕнтĕ пуçтарса
Пахча çимĕç савăнса.

Хĕл хырăмĕ аслăран,
Ĕнтĕ выçă ларасран,
Хĕлле юратса çиме
Ан ӳркен хатĕрлеме.

Кĕрхи кунпа мухтанса
Капăр тумне кăтартать,
Йĕри-тавра ăшăтса
Сар хĕвел хапăл тăвать.

## Çутçанталăк парни

Çитрĕ ылтăн кĕркунне
Пуян пахча çимĕçпе.
Савăнтарать çынсене
Лайăх ăнса пулнипе.

Сад пахчинчи панулми
Илĕртет-çке куç тулли.
Анкартинчи çĕрулми
Йăтăнать михĕ тулли.

Тав тăвать кĕркуннене
Ĕçчен халăх савăнса.
Çутçанталăк парнине
Вăхăтра вăл пуçтарса.

***Светлана НИКОЛАЕВА.***
Вăрмар районĕ,
Вăрмар.

## Шăна

Канма выртсан касура
Явăнать вăл ман тавра,
Сасси халь те хăлхара –
Ун пек шăна пит сайра.

Сăхса илчĕ алăран,
Эп ăнлантăм пит кайран:
Найкăшать вăл хăлхаран –
Юн илесшĕн-çке манран.

## Сирень

Илĕртет мана сирень,
Куç хĕсет вăл ирсерен.
Ешерет-çке çулсерен,
Киленетĕп чĕререн.
Илĕртет мана сирень!
Тунсăха та эс сирен.
Чун юратнă савниren
Хыпар кĕтеп кунсерен.
Мĕншĕн, мĕншĕн эс, сирень,
Хăв çинчен асилтерен?..

***Валентина ХРИСТОФОРОВА.***
Вăрмар районĕ,
Тупах.

## Шĕшкĕ

Пĕчĕк шĕшкĕ лартрăм
Пахча айккине.
Выльăхран сыхларăм
Хăма таткипе.

Кашни кун шкултан васкатăп
Хамăн йывăçăм патне.
Лайăх ĕмĕтпе пурнатăп:
Ах, çиесчĕ мăйăрне.

Ĕнтĕ иртрĕ кĕркунне,
Кĕçех пĕтет сив хĕлле.
Килсе çитĕ çуркунне,
Вара курăп шĕшкĕне.

Ака уйăхĕ иртсен,
Уй-хирте шур юр пĕтсен
Чупса тухрăм пахчана
Ӳснĕ йывăça курма.

Чăн та, йывăç пысăкланнă,
Тураттисем нумайланнă.
Тен, кăçалах, кĕркунне,
Çийĕп сарă мăйăрне.

…Шĕшкĕ çимĕçне тумарĕ.
Ман атте çапла каларĕ:
«Пĕчĕк-ха сан йывăçу,
Мăйăр тăвĕ килес çул».

…Унтанпа нумай шыв юхрĕ,
Симĕс курăк шăтса тухрĕ.
Эпĕ каллех пахчара
Шырап хамăн йывăçа.

Акă вăл кунтах ларать:
Ӳссе кайнă курăнать.
Сип-симĕс çулçисемпе
Ал çупать савăннипе.

Кĕр кунĕсем çитессе
Чăтăмсăррăн эп кĕтетĕп.
Мăйăр пулсанах сире
Хăнана чĕнесчĕ тетĕп.

## Куççем

Тĕрлĕрен куççем пулаççĕ:
Хурисем, кăваккисем.
Ăнланма та ăнланаççĕ
Тĕрлĕрен пире вĕсем.

Кăвак куç пăхать ачашшăн,
Ун тутийĕ те куласшăн.
Ăшшăн тинкерсе илет,
Савăк туйăм парнелет.

Симĕс куç сăнарĕ сиввĕн,
Анчах эс унран ан сивĕн.
Çирĕп çынсем – симĕс куççем.
Пурăнма та пĕлеççĕ вĕсем.

Тĕрлĕрен куççем пулаççĕ:
Хурисем, кăваккисем.
Пирĕншĕн шыва чăмаççĕ
Çакăн пек хастар çынсем.

## Кĕрхи çумăр

Ир-ирех çумăр çăвать,
Çутçанталăк савăнать:
Курăксем ав вăй илеççĕ,
Астрăсем те çитĕнеççĕ.

Кĕтӳçсем пит тарăхаççĕ –
Вĕсен ĕнисем тараççĕ.
Ман пускил те савăнмасть –
Вăл кăшман кăлараймасть.

Эп вара шкула утатăп,
Çумăра пит тарăхатăп –
Ман çине вăл пĕрĕхет,
Тумтирĕме йĕпетет.

***Людмила МАКАРОВА.***
Элĕк районĕ,
Юнтапа шкулĕ.

*Турă панипе усă курма пĕлес пулать.*

# Хаваслă 2015 самант

## Чĕнтĕрлĕ карă



1.Чăваш Республикин тĕп хули. 2. Теннисистăн ĕç хатĕрĕ. 3. Физика вăйĕн виçи. 4. Ток виçине шайлаштаракан. 5. Пăр çинче эрешлĕн ярăнакансен чапа тухнă тренерĕ. 6. Эскимос тăванĕ. 7. Фольклор жанрĕ. 8. Ĕмĕрлĕхе юлакан литература. 9. Малта пыракан хурал. 10. Автобуспа улшăнса ларса кайни. 11. Хĕллехи тумтир. 12. Чăваш çыравçи, «Телейсĕр кунсем» кĕнеке авторĕ.

## Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă



**Ăнлантарни:** хурав сăмахĕсем палăртнă йĕрке патĕнче вĕçленеççĕ е тытăнаççĕ.

**Сылтăмалла:** 1. Утă-улăм купи. 5. Тахçан лаша турттарнă трамвай. 8. Упăте тĕсĕ. 9. Мăсăльмансен ячĕ. 10. Хими элеменчĕ. 11. Ватă çын. 12. Пушă. 17. Кĕнекесен списокне тупмалли хатĕр. 20. Майла, юса /синоним/. 21. Хĕрарăмсен пит çинчи чатăрĕ. 22. Кутăн-пуçăн сикмелли хатĕр. 23. Ăна ĕçе кĕнĕ чухне тултараççĕ. 25. Кларнет вăрлакан хĕрача. 25. Хĕç пайĕ.

**Аялалла:** 1. Пĕвери пулă. 2. ... кĕперĕ. 3. Сунарçăн хатĕрĕ. 4. Авалхи скифсен хĕçĕ. 5. Кĕвĕ хайлавĕ. 6. Хаклă тирлĕ чĕрчун. 7. Ĕлĕкхи айван салтак. 11. Чулсенчен тунă ўкерчĕк. 13. Тĕлĕнтермĕш. 14. Тĕрлĕ металсен хутăшĕ. 15. Тĕс. 18. Тапăну. 18. Салтака çăмăллăх паракан билет. 19. Ăна футболист тăхăнать.

## Сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 3. Тĕвесен ушкăнĕ. 9. Ăна лаша сĕтĕрет. 10. Литература жанрĕ. 11. Вăл утрав çинче М.Горький канма юратнă. 12. Хăрăк турат. 13. Пушă. 17. Сĕтел-... 19. Хулари кану вăрманĕ. 23. Курак «тăванĕ». 25. Пўрте кĕрсе тухмалли пусма. 26. Асаннен чăматанĕ. 27. Ăна çуллах хатĕрлеме хушаççĕ. 28. Шкул ачине вăрттăн пулăшакан. 29. Вăл хырăм выççине ирттерет. 31. Чиркўллĕ ял. 32. Ўсен-тăран çитĕннĕ вăхăтри пулăм. 35. Чăваш сăвăçи. 38. Пушхир кушакĕ. 39. Тапăну. 40. Утă-улăм купи. 41. Вăрманти вĕçенкайăк. 42. Ят-шыв палли.

**Аялалла:** 1. Пĕчĕк мучи мунча тăвать /туп.юм./. 2. Чапа тухнă чура. 4. Хăлха çакки. 5. Пичче мар. 6. Панулми сорчĕ. 7. Кăнтăрти йывăç. 8. Икĕ вĕçлĕ япала. 14. Чăваш апачĕ. 15. Испанири хула. 16. Бюрократсен ушкăнĕ. 18. Хваттере янă хурт-кăпшанкă. 20. Çыру хатĕрĕ. 21. Чечексен куршакĕ. 22. Ылтăн слива. 24. Çăткăн пулă. 30. Чăваш юрăçи, хĕрарăм. 31. Пушкăрт халăхĕн паттăрĕ – ... Юлаев. 33. Уçланкăри ... /юрăран/. 34. Арпус юлташĕ. 36. Ўт çинчи ўкерчĕк. 37. Пĕвери юрăç. 38. Пĕчĕк вăрман.

## Сăмах хыççăн сăмах



**Ăнлантарни:** Хуравăн юлашки саспаллийĕ çитессин пуçламăшĕ пулса пырать.

1. Çар техники. 2. Йĕлтĕр çулĕ. 3. «Хĕн-хур айĕнче» хайлаври сăнар. 4. Хулари транспорт. 5. Чапа тухнă Раççей йĕлтĕрçи, хĕрарăм. 6. Арменири сăрт-ту. 7. Театрта хурлăхлă рольсене выляакан. 8. Раççейри халăх. 9. Комсомолец «ашшĕ». 10. Ăсчахăн ĕçĕ. 11. Ĕлĕкхи хупах хуçи. 12. Венесуэлăн тĕп хули. 13. Ракета пайĕ. 14. Унта салтак пытанать. 15. Дипломат. 16. Шĕвек виçи. 17. Варинккен сарлака вырăнĕ. 18. «Наша Таня громко плачет» сăвă йĕркисен авторĕ. 19. Полици çынни. 20. Самолет маршручĕ. 21. Вырăссен паллă киноактерĕ. 22. Электричество хăвачĕн виçи. 23. Пуянлăх. 24. Кăнтăрти ватă çын. 25. Вырăссен «бейсболĕ». 26. Кемĕр облаçĕн пуçлăхĕ – ... Тулеев. 27. Литературăри чапа тухнă капитан. 28. Чĕлхе терминĕ.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***